Инв. № ~~7066~~ 3155
II-275

# Фронтра

## Çапăçу эпизочĕсем



ЧĂВАШГОСИЗДАТ - 1941

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЕ
экземпляры в количестве ____
экземпляров
ПОЛУЧЕНЫ
22. VIII 1941 г.
Подпись Степанов
рег. № 164.

# ФРОНТРА

ÇАПĂÇУ ЭПИЗОЧĔСЕМ

1
О.Т.К.

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1941

# ПАТТĂРЛĂХПА ХĂЮЛЛĂХ

Наступлени кăнтăрла çитеспе пуçланнă. Юханшывăн тепĕр енче пытанса выртакан Германи çарĕн войскисене çапса салатас тесе, старший лейтенант Александр Коломиец хăйĕн ротине шыв хĕррине илсе пынă.

Шывăн тепĕр енче симĕс вăрман. Вăрман çумĕнче Украина ялĕ. Çав лăпкă та тӳлек ялта фашистсем пытанса тăнă.

Александр Коломиец хăйĕн ротине айлăмран илсе тухса, пĕр çӳллех мар сăртлă тӳрем çине хăпарнă. Коломиец хăйĕн кĕрешӳри тусне— лейтенант Рябой юлташа хăйĕн взвочĕпе пĕрле шыв урлă каçса, противник тылне тухма приказ панă. Рябой взвочĕ малалла шунă. Чее тăшман çакна сиснĕ пулмалла, вăл Рябой юлташа та, красноармеецсене те хăй хыççăн илĕртсе, шыв хĕрринчен ял еннелле куçнă. Рябой взвочĕ ялалла кĕнĕ. Ялта пĕр сас-чĕв те илтĕнмен.

— Мĕнле капла? Ниушлĕ неприятельсем çук кунта?—шухăшланă Рябой.

Ял лăпкă. Тӳлек. Анчах Коломиец, яланах çивĕч туйăмлăскер, çак тӳлек шăплăха пĕртте ĕненмен. Бинокль витĕр çивĕччĕн тинкерсе пăхнă. Малта çӳллĕ ыраш кашласа ларнă, тăшман çав ыраш хушшине чăмнă. Вăл пирĕн

красноармеецсене хăй хыççăн илĕртсе кайса, вĕсене çавăрса илесшĕн пулнă.

Вăхăта вăраха яма май килмен. „Противникăн пĕчĕккĕнех хутшăнса пыракан ушкăнне хăвăртрах атакăлас пулать“,—шухăшланă старший лейтенант.

Рота атакăна кĕнĕ. Атакăлакан красноармеецсем çинелле тăшмансен тылĕ енчен пульăсем шăхăра-шăхăра иртме пуçланă. Рота çĕр çумне лăпчăнса выртнă. Хыçалта ларакан пӳрт чӳречи витĕр перекен фашистсене пĕтермесĕр малалла кайма май килмен.

Коломиец хăйĕн ротинчи Тихомиров сержанта приказ панă:

— Чӳречерен гранатăпа!

Тискер тăшман чердакран, пӳрт тӳпинчен, сарайĕнчен пеме пуçланă. Паллах, ку операцине хăвăртрах пĕтермелле. Ахалĕн шыв урлă каçса килнĕ Рябой взводĕ пĕтме пултарать, противник хăй пире хирĕç наступление тухĕ.

Приказ татăклă:

— Çурта вут тĕртмелле.

Тăшмансем пирĕн çинелле пĕр таттисĕр перпе тăнине пăхмасăр, Коломиец сарай патне чупса пырса, ăна вут тĕртсе янă. Улăм витнĕ çурт çийĕ часах чĕрĕлсе кайнă, хĕрӳ çулăм йывăç стенасене те ярса илнĕ, унтан хӳме çине куçнă. Пирĕн боецсен паттăрлăхĕнчен хăраса, фашистсем чĕтрене ернĕ, хăйсене хăйсем шанмасăр тăнă, иккĕленнĕ. Ирĕксĕрех вара тухса тармалла пулнă.

— Рота, малалла!

Боецсем фашистсене хӳтерме пуҫланӑ. Вӗсем картасем урлӑ хӑвӑрттӑн сике-сике каҫнӑ, улӑхсем урлӑ чупса иртнӗ.

Пирӗн ӗҫ—тӗрӗс ӗҫ, малалла...

Малалла... Малалла...

Ҫак сӑмахсенче калама ҫук хӑватлӑ вӑй тапса тӑрать, вӑл сӑмахсем пирӗн боецсене ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тума хавхалантараҫҫӗ.

Александр Коломиец сасартӑк такӑннӑ, чупас хӑвӑртлӑха чакарнӑ, нумай та каяйман—тӑрӑнса ӳкнӗ. Вӑл тӑрасшӑн пулнӑ, тӑнӑ та—нумай та кайман, каллех ӳкнӗ. Ҫапах та вӑл малалла упаленнӗ. Ҫав вӑхӑтрах вӑл хӑйӗн ротине малалла ертсе пынӑ.

Пӑртак кайсанах вӑл йӗплӗ хулӑ йывӑҫҫисен сайра тӗмисем патне шуса ҫитнӗ. Вара тин хӑйӗн ал-урисем ывӑннине, вӑй пӗтсе пынине сиснӗ. Унӑн сулахай чӗркуҫҫи хӑйне итлемен: ни авӑнман, ни тӑсӑлман.

— Амантрӗҫ, шуйттансем...

Боецсем наступленине мӗнле туса пыни, вӗсен хӑвӑрттӑн вӗлтлетсе иртекен мӗлкисем лейтенант выртакан йывӑҫ тӗмисем хушшипе аванах курӑннӑ. Коломиец малалла кайма пултарайман, анчах унӑн сасси ҫирӗп пулнӑ.

Вӑрҫа хӑюллӑн кӗрсе пыракан боецсене вӑл ҫапах ҫивӗччӗн сӑнаса тӑнӑ, хӑйӗн ротине команда пама ҫапах пӑрахман. Кӑшт вӑхӑт иртсен, лейтенант Александр Коломиец чавсисем ҫине таянса тӑнӑ, хӑйӗн роти шыв урлӑ

каçса, Рябой взвочĕпе пĕрлешнине, икĕ рота пĕрле пулса тăшмана хирĕç вăйлă наступлени тунине курнă.

* * *

Максим Зюкин, кĕçĕн лейтенант, хăйĕн подразделенине каялла çавăрма задани илнĕ. Пирĕн войскăсен тылне десант анса ларнă пулнă.

Приказ кĕске пулнă:

— Пирĕн подразделени çав десанта пĕтерсе тăкмалла.

Кам пĕлет, ăçта, хăш тĕле аннă-ши тăшмансен парашютисчĕсем, ăçта, хăш тĕле пытаннă-ши вĕсем? Шурлăха, ращана, çул хĕрринчи канавсене ухтарнă,—анчах никама та тупайман. Зюкин сывăхри йывăçа хупăрласа илме шутланă. Подразделени малалла шунă, тăшман пырса тапăнасран хытă сыхланнă, тавралла хытă сăнаса итленĕ.

Зюкин инçех те мар çакна асăрханă: шоссе çинчи танкетка патĕнче красноармеец форми тăхăннă çынсен ушкăнĕ лăпчăнса тăнă. Çав ушкăн патне çывхарса пыракан подразделени те çав картинăнах асăрханă. Вĕсенчен пĕри—чи вăрăмми, сарлака хулпуççиллĕскер, аллипе сулнă:

— Эй, килĕр кунта!

— Камсем эсир?

— Советсемех, хамăрăннисем...

— Курмастăн-и?...

— „Хамăрăннисем“,—шухăшланă кĕçĕн лейтенант. Вăл „хамăрăннисем“ патне çывхарнă.

Вĕсен çывăхне пынă май, тырă хушшинче çар тумĕ тăхăннă çынсем пытанса йăпшăннине асăрханă. Пирĕн подразделени çав чее тăшмансем тĕлне çитсенех, Зюкин нимĕç чĕлхипе команда панине илтнĕ. Тăшманăн тискер те ултавлă ĕçне кĕçĕн лейтенант часах тавçăрса илнĕ. Вăл хăйĕн подразделенине çирĕп приказ панă:

— Çапăçăва!

Тĕрлĕ майсемпе пытанса тăракан чее фашистсем çине боецсем хыттăн пеме пуçланă. Тăшман танкетки пĕр пысăках мар çурт çинелле пыма пуçланă. Вăл çурт хыçĕнче пирĕн боецсем пытанса тăнă пулнă.

Зюкин çакăн çинчен оруди командирне пĕлтерме хăйĕн подразделенинчи пĕр красноармееца янă. Ку оруди Зюкин подразделенинчен мĕнпурĕ те 500 метрта çеç пулнă. Вăхăт нумай та иртмен, пирĕн оруди тăшман çинелле тăхлан сапма пуçланă. Халран тухнă танкетка кĕçех чарăннă.

Германи парашютисчĕсем ним тума аптранă енне, пĕр армана кĕрсе пытаннă. Вĕсем Зюкин подразделенийĕ çине пеме пуçланă.

— Армана пĕтерсе тăкмалла!

Подразделени хăйĕн пĕр красноармеецне çав арман патне янă. Анчах, вăхăт нумай та иртмен, подразделенинчен янă красноармеец каллех хăйĕн оруди командирĕ патне таврăннă. Минутăсем хăвăрт иртнĕ. Оруди нимĕн те чĕнмен. Шăп пулнă. Фашистсем пенĕçемĕн персе тăнă, тăшман пульлисем хаярлансах пынă.

Кĕçĕн лейтенант Зюкин, çĕр çийĕн упаленсе, оруди командирĕ патне шуса пынă. Тăшмансем Зюкина асăрханă. Хаяр та чарусăр пульăсем ун пуçĕ çинчен шăхăра-шăхăра иртнĕ. Зюкин çĕр çумне лăпчăннă, вăл татах малалла шунă. Тăшмансем хăш тĕлте тăни çинчен оруди командирне пĕлтерсе, кĕçĕн лейтенант каллех арман патнелле вирхĕннĕ. Вăл хăйĕн подразделенийĕ патне çитме те ĕлкĕрмен... тăшман пытанса тăракан арман хăй вырăнĕнчен айккинелле ыткăннă. Кĕçех ăна хаяр çулăм хыпса илнĕ.

Çапла вара пирĕн красноармеецсем тăшмансен десантне ним юлмичченех пĕтерсе тăкнă.

Действующи арми.

Я. ЦВЕТОВ.

(„Известия" хаçатран)

## СТАЛИНЛА СОКОЛСЕН ПАТТĂРЛĂХĔ

Кăвак тӳпе ирхи шуçăм çуттипе ялкăшса тăнă. 4 сехет те 10 минут. Кăнтăр енчи мирлĕ хула çине фашистла разведчик-бомбардировщик вĕçсе пынă, вăл Н-ски чаçĕн аэродромĕ еннелле çул тытнă.

Боевой тревога парсанах, командир лётно-технически состава пухса, çапла каланă:

— Пире фашистла çăхансен ирсĕр тапăнăвне пуринчен малтан сирсе ярас телей килсе тухрĕ. Паян пирĕнтен нумайĕшĕн сталинла авиацин боевой хăватне сывлăшри çапăçура кăтартса парас пулать. Приказ паратăп: тăшман разведчикĕсене совет территорийĕ çинчен кăларса ямалла мар. Лейтенант Ермак, манпа пĕрле!

Стройран тĕреклĕ летчик-истребитель Ермак тухрĕ. Хăй çине пысăк шанчăк хунăшăн унăн куçĕсем хаваслăн çуталаççĕ.

— Ĕçе тытăнма ирĕк парăр?—ыйтрĕ вăл командиртан.

Командир унăн аллине хытă чăмăртать. Комсомолец Ермак хăйĕн истребителĕ патне чупать.

Çапăçу çиçĕм çиççе илнĕ пек хăвăрт пулса иртнĕ. Ермак тӳрех фашистла çăхана хирĕç вĕçсе çĕкленет. Фашист ăна курать те айккинел-

ле пăрăнса каять. Хăюллă çамрăк лейтенант маневр тăвать: тăшман самолечĕн хӳри тĕлне вĕçсе хăпарать, пулеметран пеме тытăнать. Бомбардировщик сулланса каять, çунма тытăнать. Çулăм ялкăшать. Вăхăт нумай та иртмест—вăл çĕре персе анать.

Çак вăхăтра аэродром патнелле тăшманăн тата вунă бомбардировщикĕ вĕçсе пыраççĕ, вĕсене хӳтлесе „Мессершмитт" йышши истребительсем вĕçеççĕ.

Совет истребителĕсен группи сывлăша вĕçсе çĕкленет.

Çапăçу тĕлĕнмелле вăйлă та хаяр пулса иртет. Фашистсен бомбардировщикĕсем епле пулсан та аэродром патне çĕмĕрсе кĕме, ăна аркатса тăкма тăрăшаççĕ. Анчах та сталинла паттăр соколсем хĕрӳллĕ атакăсем тăваççĕ, тăшманăн боевой стройне арпаштарса яраççĕ.

Социализмлă тăван çĕршывăн тăшманĕсене хирĕç пулса иртнĕ хаяр çапăçусенче пиçĕхнĕ летчик-коммунист Мокляк сывлăшри çапăçăва пуçланă. Вăл хăйĕн машинине кирлĕ пек çавăрттарса пырса, противник самолечĕ çине пулеметран персе янă. Куç умĕнче фашистла бомбардировщикăн знакĕсем вĕлтĕртетсе илнĕ. Халĕ ĕнтĕ тепĕр машини çине тапăнма май пулнă.

Летчик-коммунистăн геройла примерĕ ытти истребительсене те хавхалантарнă. Асса кайнă тăшмана сывлăшри боецсем хăюллăн атакăласа çĕмĕрнине çĕр çинчи çынсем савăнса пăхса тăнă.

Темиçе минут та иртмен, тăшман самолечĕсен пысăкрах пайĕ аэродром тавра тӳне-тӳне выртнă.

Ытти самолетсем тарма пуçланă.

Истребительсем аэродром тĕлĕнчех звено-звенопа вĕçсе иртнĕ, унтан анса ларнă.

Пурте хăюллă боецсем патнелле чупнă, вĕсене хĕрӳллĕн ыталанă, аллисене чăмăртанă:

— Пирвайхи мухтавлă çĕнтерӳпе—сывлăх сунса саламлатпăр!—тенĕ савăнса.

Техниксемпе мотористсем боевой машинăсене тĕрĕсленĕ вăхăтра каллех тревога сигналĕ янăраса кайнă. Тăшманăн татах тепĕр 12 самолечĕ çывхарса килнĕ. Пирвайхи хут аркатса яни фашистла вояксен ĕмĕтне сӳнтермен пулас. Пирĕн летчиксем вĕсен атакисене те ăнăçлăн сирсе янă.

Вăхăт нумай та иртмест—тăшманăн 16 самолечĕ çывхарса килет. Тăшман ирсĕр те чее. Вăл хăй шутласа хунине тăвасах тесе, нимĕн те шеллемест. Пирĕн летчиксем, юратнă тăван çĕршыв умĕнче хăйсен тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртсе, вилĕмрен шикленсе тăмасăр геройла кĕрешеççĕ.

Çак атакăра коммунист Мокляк каллех малта пырать. Вăл ывăнма пĕлмест; тăшманăн тепĕр самолечĕ каллех çĕр çине анса тăрăнать.

Пирĕн истребительсен атакисем ытларах та ытларах вăйланса пыраççĕ. Фашистсен самолечĕсем пĕрин хыççăн тепри, вутлă факел пек, çулăмланса ӳкеççĕ.

Сывлăшри çапăçун хаяр шавĕ кăштах лăпланнă хыççăн, часть командирĕ аэродромăн тикĕс уйĕ çине—чĕнмен хăнасемшĕн масар пулса тăнă уй çине пăхса илет. Йĕри-тавра, хӳрисене çӳлелле кăнтарса, „Мессершмиттсен" кăмрăкланнă ванчăкĕсем сапаланса выртаççĕ.

Çапăçу хыççăн командир лётно-технически состава пĕр çĕре пухать те кĕскен калать:

— Пирĕн истребительсем паттăррăн çапăçрĕç. Ыран татах та лайăхрах çапăçăпăр.

Действующи арми.

М. ДАШЕВСКИЙ.

(„Известия" хаçатран)

## ФАШИСТСЕН ПОДВОДНĂЙ ЛОДКИСЕНЕ ПУТАРНИ

Çанталăк тӳлек те хĕвеллĕ пулнă. Сигнальщиксем шыв çинче тата сывлăшра мĕн пуррине тимлĕн сăнаса пынă.

— Сылтăм енче—торпеда!—пĕр сасăпа пĕлтернĕ Глущенкопа Васильев сигнальщиксем.

Мостик çинче тăракансем пурте карап патне çывхарса килекен торпеда йĕрне курнă.

— Сылтăм енче—подводнăй лодка!—тесе кăшкăрнă наблюдатель Мартыненко.

— Право на борт! — приказ панă карап командирĕ.

Карап сасартăк çулне улăштарнă. Торпеда карапăн сылтăм борчĕ çумĕпе иртсе кайнă. Залп панă хыççăн фашистсен подводнăй лодки çӳлелле çĕкленсе илнĕ, çавăнпа вара хăй хăш вырăнта пулнине татах та ытларах кăтартнă унтан сасартăках шыв айнелле анма пуçланă. Лодка пулнă вырăнта шыв пĕтĕрĕнсе тăнă.

Ланцовпа Верещакăн орудийнăй расчечĕсем çиййĕнчех пеме пуçланă.

Акă ĕнтĕ шыв форштевень патĕнчех пĕтĕрĕнет.

Тепĕр самантран карап халĕ кăна тăшман лодки курăннă вырăна пырса çитнĕ. Лодка

карап пырса тăрăнтарасран пăрăнма ĕлкĕрнĕ. Анчах та машина отделенийĕсенче пулнă çынсем пурте карап темĕнле хытă япала урлă каçса кайнине сиснĕ. Подводнăй лодка çак вырăнтах пулнă. Вăл тарăна анса кайма ĕлкĕреймен иккен-ха.

— Бомбăсем пăрахма пуçлас! — приказ панă командир.

Тарăна пăрахмалли бомбăсем пĕрин хыççăн тепри шыв айнелле шăтарса кĕрсе кайнă, хăйсен çулĕ çинче мĕн тĕл пулнă — пĕтĕмпех аркатса тăкнă.

Карап малалла шунă, унтан подводнăй лодка пытаннă вырăнпа тепĕр хут иртсе каяс тесе, татах каялла çавăрăннă. Шăпах çак самантра ĕнтĕ сылтăм бортран инçех мар питех те вăйлă взрыв кĕрлесе кайнă. Карап кунта тăшман лартса хăварнă мина çине пырса кĕнĕ мĕн. Хура тĕтĕмпе шыв, темĕн пысăккĕш юпа пек пулса, сывлăшалла сирпĕнсе хăпарнă.

Карап çинче пулнă çынсене пурне те сывлăш вăйĕ çапса ўкернĕ. Иккĕмĕш статья старшинине Аникина борт патнелле сирпĕтсе янă, вăл аран кăна карап çинче тытăнса юлнă. Боевой чаçĕн командирĕ корма скачĕ çине ўкнĕ. Тепĕр самантран вăл тинĕсе персе анас патнех çитнĕ. Анчах та çак самантра, хăйĕн пурнăçĕшĕн хăраса тăмасăр, ун патне краснофлотец Мандриченко чупса пынă. Вăл командира аллинчен ярса тытнă та ăна палуба çине туртса кăларнă.

Взрыв пулнă вăхăтра машинăсемпе пăс хуранĕн отделенийĕсенче хăшпĕр механизмсем пăсăлнă. Çак вăхăтра кунта вахтăра отделени командирĕсем Александров, Мичинский, Майоров тата вĕсене пăхăнса тăракан боецсем пулнă. Вĕсем механизмсене хăвăрт йĕркелесе янă. Карап пĕр çекунд хушши те чарăнса тăман. Тăшман мини ăна нимĕнле сиен те кӳмен.

Бомбăсем пăрахнă вырăна тепĕр хут пырсан, совет морякĕсем фашистсен подводнăй лодки пĕтнине курнă.

* * *

Çĕрле катер çинче приказ илнĕ: халех Н. районне тухса каймалла, унта тăшманăн подводнăй лодки пуррине палăртнă. Часах тапранса тухнă, каймалли çĕре çул тытнă.

Пăртакран сигнальщик Куимов çапла пĕлтернĕ:

— Сулахай енче — перископ!

Подводнăй лодка катер патĕнчен инçех те пулман, лодка çинчи çынсем совет морякĕсем çавăн пек хăвăрт пырса тухасса шухăшламан та.

— Лево на борт! — приказ панă катер командирĕ. — Пĕтĕм хăвăртлăхпа малалла!

Пĕрремĕш статьяри рулевой старшина Гетманский приказа пурнăçа кĕртнĕ. Турбинист Петров тата котельнăй машинист Негин двигательсене кирлĕ хăвăртлăхпа ĕçлеттерме тытăннă.

Шыв айӗнчи фашистла вӑрӑ-хурахсем тарӑналла анма пуҫланӑ.

Катер подводнӑй лодка шыв айнелле анса кайнӑ вырӑна пырса ҫитнӗ.

— Бомбӑсем пӑрахма пуҫлас!

Бомбӑсем пӑрахмалли вырӑнта краснофлотецсем Косаревпа Гриценко тӑнӑ. Бомбӑсем пӗрин хыҫҫӑн тепри шыва чӑмнӑ. Ҫак самантра радист Соколов, соединени штабӗн радиостанцийӗпе ҫыхӑнас тӗлӗшпе ӗҫленӗскер, сасартӑках подводнӑй лодкӑн рацийӗ ӗҫленине илтнӗ. Тӑшман нимӗҫ чӗлхипе позывнойсем панӑ.

Шыва татах темиҫе бомба чӑмнӑ. Вӗсенчен пӗрин взрывӗ ыттисем пек пулман. Вӑл ҫурӑлнӑ хыҫҫӑн шыв пӗтӗрӗнсе ҫаврӑнма пуҫланӑ. Подводнӑй лодкӑн радиостанцийӗ сасартӑках калаҫма чарӑннӑ.

Фашистсен подводнӑй лодки хӑйӗн вилӗмне тупнӑ.

(ТАСС).

## КАВАЛЕРИСТСЕМПЕ ПИЛОТСЕМ

Тул çутăлса килнĕ вăхăтра тăшман Прут юханшывĕн леш енчен, Фальчу патĕнчен шыв урлă каçма пуçланă. Пирĕн пограничниксем тăван çĕршывăн чиккисене пĕтĕм вăя хурса хўтленĕ, анчах та тăшман хĕснине тытса чарайман: фашистсен йышĕ пограничниксен йышĕнчен темĕн чухлĕ пысăкрах пулнă. Каç пулнă тĕле пирĕн çыран çинче нумай пехота, танксем пухса тăратса, противник наступлени тума пуçланă. Тăшман чаçĕсене малалла кайма çийĕнчех чарса лартмалла, ăна çĕмĕрсе тăкмаллах отпор памалла пулнă.

Бомбардировщиксемпе истребительсем тĕлĕнмелле пысăк хăвăртлăхпа сывлăша вĕçсе çĕкленнĕ. Вĕсем чикĕ урлă каçнă тăшман çине тĕрлĕ енчен пыра-пыра тапăннă. Çакă вăл калама çук вăйлă та вирлĕ атака пулнă. Истребительсем кăна мар, бомбардировщиксен тăхăршар самолетлă хăшпĕр группиcем те тăшман çине аялтан вĕçсе пынă, ун çине бомбăсем, вилĕм кўрекен пульăсем тăкса иртнĕ. Самолетсем тăшман пехотипе танкĕсем çине пĕр вăхăтрах пырса тапăннă.

Результатсем питех те ăнăçлă пулнă. Нумай танксене çийĕнчех пĕтерсе тăкнă. Пехотăна

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
... АССР

калама çук пысăк çухату кӳнĕ. Тăшман речĕсем пăтрашăнса кайнă. Атакăран хăраса ӳксе, тăшман нимĕн тума та пĕлмен.

Çак самантпа усă курса, совет кавалерисчĕсем тăшман çине капланса пынă. Хĕрлĕ юлапутçăсем çапăçăва мĕн тери пысăк хавхаланупа, мĕнле пысăк хăюллăхпа пырса кĕнине çырса кăтартма та йывăр. Çап-çутă хĕçсене вылянтарса, вĕсем тăшман речĕсене çĕмĕрсе кĕнĕ, касакаса туранă, кĕпер патнелле хăвалапă.

Тăшман кĕпер çинче хирĕç тăма хăтланнă, анчах та каçмалли вырăн часах касса туранă салтаксемпе тулса ларнă. Хăватлă кавалери, çул çинче мĕн тĕл пулнине пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкса, тăшмана малалла та малаллах хăвалапă, кĕпер çинче чарăнса тăмасăр Фальчу патне çити çапăçса кайнă. Утлă боецсен хавхаланулла вăйĕ, çĕнтерӳ тăвас шанчăкĕ çавтери пысăк пулнă.

— Ур-ра! Тăван çĕршывшăн, Сталиншăн! — тесе кăшкăрса, вĕсем Фальчу урамĕсене çĕмĕрсе кĕнĕ, часах ăна хăйсен аллине çавăрса илнĕ, тăшман чаçĕсене хăваласа кăларнă.

Йăлтах лăплансан, çапăçу итогĕсене тунă хыççăн, кавалеристсем çакăн пек телеграмма янă:

*„Пирĕн валли атака пуçлама хатĕрлесе панă летчиксене пирĕнтен халех тав тума ыйтатпăр".*

Телеграммăна çийĕнчех кирлĕ çĕре илсе çи-

тернӗ, хăйсен тусĕсем — совет кавалерисчĕсем янă салама летчиксем хаваслăн хумханса вуланă.

* * *

Фронтăн эпир тăракан участокĕнче тăшман хăйĕн авиацийĕн тĕп атакине Н. еннелле сарса ячĕ. Çак самантра тăшман машинисен чылаях пысăк групписыр пырса тапăннă пĕр аэродромра совет самолечĕсем питех те сахал — пурĕ ултă истребитель кăна пулнă. Машинăсене сывлăша вĕçтерсе хăпартма шутлă минутăсем кăна юлнă.

Тăшман самолечĕсене çийĕнчех шутласа кăларма май килнĕ — вĕсен 18 машина пулнă. Анчах та вĕсен йышĕ совет пилочĕсене хăратма пултарайман. Вĕсем çапăçăва хăюллăн кĕнĕ. Нимĕçсен отрядне арпаштарса ярса, пирĕн истребительсем ăна ик-виçшер самолетлă группăсем çине уйăрса янă.

Чылаях пысăк йышлă противнике хирĕç çапăçма йывăр пулнă. Анчах та, кирек мĕнле пулсан та, ăна урăх çĕрелле, аяккалла илсе каймалла пулнă.

Лейтенант Морозова виçĕ „Мессершмитт“ тивнĕ. Вăл хăйĕн „Чайки“ çинче тĕлĕнмелле ĕçсем тунă, машинăн маневрсем тăвас пултарулăхĕпе вĕçне çитиех усă курнă. Морозов хăйĕн пуççаврăнса каймалла ĕçне тума пĕр секунда та чарăнман. Ăна хирĕç тăшманăн виçĕ самолечĕ çапăçнă, çапăçура кам çине кам тапăннине те, кама кам атакăланине те, камран кам пăрăнса кайнине те уйăрса илме пулман. Моро-

зов хăйĕн задачине пурнăçа кĕртнĕ. Кашни маневрпах вăл тăшмана аяккалла илĕртсе кайнă, юлашкинчен виçĕ „Мессершмитт" малтан тĕл пулнă вырăнтан пайтах километр инçетелле кайнă. Пĕр „Чайкăпа" виçĕ „Мессершмитт", пĕр совет летчикĕпе нимĕçсен виçĕ летчикĕ хушшинчи çак çапăçу сехет çурă хушши тăсăлнă. Морозов çапăçăва çакăн пек çине тăрса вĕçленине тĕлĕнмелле пысăк чăтăмлăхпа, хăюлăхпа, паттăрлăхпа, тăван çĕршыва вĕçĕ-хĕррисĕр юратнипе кăна ăнлантарса пама пулать. Вăл юнланса пĕтнĕ, — ăна тăшман пульли амантнă, унăн вăй-хал пĕтсе килнĕ, патронсем пĕтнĕ.

Çапла пулсан та, вăл тăшмана улталаса, унтан пăрăнса кайнă, самолета чиперех антарса лартнă.

* * *

Совет соколĕсем тăван çĕршывăн чиккисене ывăнма пĕлмесĕр хӳтĕлеççĕ, йывăр çапăçăва хăюллăн кĕреççĕ. Пĕр кун хушшинче вĕсем пилĕк-ултшар хут боевой вĕçеве кайса килеççĕ. Вăрçă пуçланнăранпа вĕсем Германин нумай самолечĕсене персе антарнă. Пирвайхи кунах вĕсем пирĕн участокра фашистсен аллă-утмăл летчикне тыткăна илнĕ. Вĕсем тăван çĕршыв ячĕпе, аслă Сталин ячĕпе, отечественнăй вăрçăн пысăк тĕллевĕ ячĕпе хастарлăн та хăюллăн çапăçаççĕ, хăйсен мухтавлă ĕçне паттăррăн туса пыраççĕ.

Э. ВИЛЕНСКИЙ,
С. ГАЛЫШЕВ.

Действующи арми.

(„Известия" хаçатран)

# ТĂШМАН САМОЛЕЧĔСĔНЕ ПЕРСЕ АНТАРНИ

— Сывлăш! Иккĕмĕш номерлĕ тĕллев, Германи бомбардировщикĕсем! — илтĕнчĕ разведчик-красноармеец Фоменко сасси.

Пирĕн батарея маскировка туса вырнаçнă. Вăл ăçтине курма çук. Разведчик асăрхаттарнă хыççăн çийĕнчех хĕрӳллĕ ĕç пуçланчĕ.

Ирхи тĕтрелĕхре тăшмансен икĕ бомбардировщикĕн силуэчĕсем кăшт кăна палăраççĕ.

Кĕçĕн лейтенант Шкодаревич команда парать.

Расчетсене хăвăрт та тĕрĕс тăваççĕ. Вĕреннĕ вăхăт ахаль иртмен. Н-ски зенитнăй чаçре батарея ахальтен мар ĕнтĕ чи лайăх батарея шутланать.

— Тĕллеве тупнă! — доклад парать кĕçĕн сержант дальномерщик Казьмин. — Мĕнле çӳллĕшрине палăртнă, пур расчетсене те тупнă.

— Противник самолечĕсен группи çине, малта пыракан самолет çине тĕллĕр! Гранатăпа!

Орудисен командирĕсем — кĕçĕн сержантсем Павленкопа Семенов, старшина Арсеньев, красноармеец Осипчик тата приборнăй отделении командирĕ сержант Соловьев çиçĕм пек хăвăрт ĕçлеççĕ.

Пенĕ сассăсем илтĕнчĕç. Кĕрслетнĕ сасă пĕрин

хыççăн тепри янрарĕ. Сывлăшра тăшман самолечĕпе юнашар тĕтĕм тухни курăнчĕ.

— Самолет çунать! — хаваслăн илтĕнчĕ Фоменко сасси.

Темиçе секунд кăна иртет — телефон янăраса карĕ. Кĕçĕн сержант Штольтенберг батарейăран аяккарах вырнаçнă сăнав пунктĕнчен доклад парать:

— Сăнав пункчĕн районĕнче — тăшманăн çулăм хыпса илнĕ самолечĕ. Ӳкнĕ вырăнта тĕтĕм мăкăрланни курăнать.

Тăшман самолечĕсем çине çĕр çинчен çеç мар, сывлăшран та переççĕ.

Аэродром тĕлĕнче хĕрлĕ ракета вĕçсе çĕкленчĕ. Ку—тревога сигналĕ. Капитан Новиковăн дежурнăй эскадрильи хăвăрт сывлăша çĕкленчĕ. Самолетсем çӳлелле хăвăрт хăпараççĕ. Истребительсем нимĕç бомбардировщикĕсене хирĕç вирхĕнеççĕ. Малта машинăсем курăнаççĕ. Вĕсем питех те çӳлте.

Новиков самолечĕ çӳлелле вирхĕнсе чăмнă. Акă вăл кĕçех бомбардировщик патне вĕçсе çитнĕ. Анчах та çак вăхăтра лешсем зенитнăй орудисенчен перекен вырăнта пулнă. Кĕçĕн лейтенантăн-Шкодаревичăн зенитчикĕсем бомбардировщиксем çине пеме пуçланă. Новиков вĕсене чăрмантарас мар тенĕ, атака тума чарăннă.

„Çăлăнса тухаймăр“,—тесе шутланă вăл. Хăй айккинелле пăрăннă. Çавăнтах вăл пирĕннисем

сыхлакан объект патне татах икĕ бомбардировщик систермесĕр вĕçсе пынине асăрханă.

Летчик-истребитель çав самантрах çӳлелле чăмса хăпарать. Кĕçех вăл тăшмансем çине çӳлтен ӳкекен чул пек чăмса анать. Пульăсем леккипе пĕр бомбардировщикĕ йăсăрланма пуçланă, аякки çине тӳннĕ те, сывлăшра тĕтĕм йĕрĕ хăварса, çĕре ӳкме пуçланă. Тепĕр бомбардировщикĕ, хăйĕн тусĕн пурнăçĕ телейсĕр вĕçленнине сиссе, васкавлăн тарма пуçланă. Мĕнтери хăвалаласа каяс килнĕ ун хыççăн Новиковăн, анчах та прибор машина çинче бензин пĕтнине кăтартнă.

„Таварăнас пулать,—тесе шутланă капитан,—тăшмана ытти истребительсем персе антарĕç". Летчик çавăрăннă та, аэродром патнелле вĕçсе кайнă.

Çавăнтах капитан машинипе юнашар тепĕр истребитель-лейтенант Ибатуллинăн машини анса ларнă.

— Противникăн бомбардировщикне персе антарнă,—тесе пĕлтернĕ майора лейтенант Костромин.

Лейтенант сывлăшра вăрă-хурахсен бомбардировщикне хирĕç çапăçни çинчен каласа панă.

Противник совет истребительне курсанах тарма пуçланă иккен, çӳлелле хăпарса пытанма хăтланнă, анчах Ибатуллин ăна куçран çухатман.

Атака татăклă та çиçĕм пек хăвăрт пулса иртнĕ. Пулеметран кăларса янă пульăсем ăна

пӗрин хыҫҫӑн тепри пыра-пыра лекнӗ, бомбардировщика персе антарнӑ.

Ҫапла вара сывлӑшран та, ҫӗртен те атакӑласа, пирӗн истребительсем тӑшманӑн тапӑнӑвне хӑюллӑн сирсе янӑ. Совет истребителӗсем пурте хӑйсен базисене таврӑннӑ.

Батальоннӑй комиссар

**Г. СМОРЫГО.**
**Я. МИЛЕЦКИЙ.**

(„Известия“ хаҫатран).

## ХĂЮЛЛĂ ТА, ЧĂТĂМЛĂ ТА

Боевой приказа пурнăçланă. Тăшман объекчĕсенчен ĕнтĕ кĕл çеç тăрса юлнă. Бомбардировщик кирлĕ таран çӳлелле вĕçсе хăпарать те, ак каялла, хăйĕн бази еннелле çул тытать.

Çав вăхăтра, кĕтмен çĕртенех, стрелок-радист Кузнецов юлташ: „Сулахайра фашистсен икĕ истребителĕ курăнать",—тесе пĕлтерет.

Самолет командирĕ Юр юлташ тăшманпа хире-хирĕç тăрса, çапăçма шутлать. Вăйсем тан-не танах мар та,—пĕр бомбардировщикăн икĕ истребитĕле хирĕç тухмалла та, анчах Сталин соколĕсем хăçан тăшманран хăраса тăни пур-ха?!

Истребительсем пирĕн самолет çине çăхан пек тирĕнсе, унăн хыçне ӳкесшĕн иккен. Анчах та пирĕн лейтенанта улталама хĕн, вăл фашистсен шухăшне çийĕнчех сиссе илет те, самолета пăрать, ăста маневрсем туса, хăйне меллĕрех вырăн йышăнать.

Стрелок-радист Кузнецов юлташ пулемет гашеткине пусать. Пĕр „Мессершмиттне" вут хыпса илет те, вăл вара çавăнтах тинĕс çине персе анса, тинĕс тĕпне путать.

Тăшманăн тепĕр самолечĕ пирĕннисем çапла хытă ăшалантарнине тӳсеймест, аяккалла пăрăнать, анчах пăртак тăрсан вăл ак каллех пирĕн

бомбардировщик çине килсе тапăнать. Хытăран та хытăрах пеме тытăнать. Снарядсем çурăлса çеç тăраççĕ. Пĕр снарячĕ ак çывăхрах çурăлса каять те Совет самолетне сылтăм енчен сиенлет. Çапла пулсан та, паттăр летчиксем пуç усмаççĕ. Пулеметпа вăйлăн пере-пере, вĕсем темиçе хутчен те тăшмана хăйсем патĕнчен хăвала-хăвала яраççĕ.

Самолет ĕнтĕ халĕ паçăрхи пекех вĕçме пултараймасть пулсан та, пирĕн летчиксем çаплахха хăйсен çулĕнчен пăрăнмаççĕ.

Сывлăшра икĕ самолет çапăçма пуçланăранпа акă 20 минут иртет. Тăшман пульлисем бомбардировщике ала пек шăтăкласа пĕтереççĕ. Радиостанци ĕçлеми пулать, самолетăн тăвата пайĕнчен пĕр пайĕ пĕтĕмпех тăпăлса тухать, сулахайри мотор пăрăнса каять.

Самолет ĕнтĕ минутсерен аялалла анса пырать. Тăшман истребителĕ çаплах-ха тапăнать. Çакна кура, стрелок-радист Кузнецов юлташ хăй самолечĕн стабилизаторĕ тăрăх пеме тытăнать. Перет те тӳрех тăшман самолечĕн хӳрине шăтарать. Пуççăрланса кĕнĕ „Мессершмитт" тайăнса-тайăнса каять те, вутпа хыпса, чул пекех аялалла тирĕнет. Гитлерĕн ку вăрăхурахĕ те лешин пекех, ĕмĕрлĕхех тинĕс хумĕсем айне пулать.

Аялта—тинĕс. Тăван çĕршывăн сыранĕсем патне çитме 150 миль ытла. Çĕмрĕлнĕ самолет летчиксене пăхăнмасть. Вăл аннăçемĕн аялалла анать.

Тинĕс çине анса ларма 20 метр çеç юлчĕ... Вуннă... Пилĕк метр çеç юлчĕ. Малалла ĕнтĕ вĕçеес çук. Летчиксем моторсене чараççĕ. Машина шыв çине шаплатса йывăррăн персе анать те, минут çурăранах тинĕсе путать.

Çав минут çурă хушшинче пирĕн паттăрсем кабинкăран тӳрех шыв çине тухса, хăйсемпе пĕрле резина киммине илме ĕлкĕреççĕ.

Летчиксем тинĕс варринче хăйсем пĕр-пĕччен, çимелли апатсăр, ĕçмелли шывсăр тăрса юлаççĕ. Ахаль те çăмăлах мар кĕрĕклĕ комбинезонсем шывра шӳсе кайса, пушшех те йывăрланса çитеççĕ—шыв тĕпнелле сĕтĕреççĕ. Сывлăшри вăраха пынă çапăçу летчиксене ывтармаллипех ывтарнă.

„Икĕ „Мессершмиттран" çăлăнтăмăр пулсан, нивушлĕ халĕ çăлăнса пулмĕ", —тет те лейтенант Юр, приказ парать:

— Кимме сывлăш тултарăр!

Тата тепĕр минутран штурман çĕнĕ инкек çитни çинчен пĕлтерет: сывлăш тултармалли шланг та шыва путнă, кĕсменсем те юхса кайнă иккен.

— Çăварпа вĕрсе хăпартăр!

Виçĕ паттăр летчик вăрахчен шывра тапаланнă, резина кимме вĕрсе хăпартасшăн пулса, вăрахчен пĕрин хыççăн тепри çăварпа вĕрнĕ. Ишме çăмăлтарах пултăр тесе, вĕсен хăйсен çийĕнчи кĕрĕклĕ комбинезонĕсене те, уринчи аттисене те пăрахма лекнĕ.

Тăрăшсан-тăрăшсан, кимме вĕрсе хăпартнă-хăпартнах. Виççĕшĕ те кимĕ çине вырнаçаççĕ.

Тÿпере çăлтăрсем палăрма тытăннă. Çав çăлтăрсем тăрăх штурман часах хăйсен ăçталла çул тытмаллине пĕлнĕ. Кĕсменсем çуккипе, алăпа ишнĕ. Кимĕ хăвăрт каяйман.

Вăхăт çав тери ерипен шунă. Пирĕн геройсем пуç усман, хăраса ÿксе çухалса кайман. Вĕсем хăйсем ун пек пулсан, тăван çĕршывăн çыранне ĕмĕрне те курас çуккине питĕ лайăх туйса тăнă.

Ĕнтĕ ирĕ те çитнĕ. Хырăм выçни систере пуçланă, çав тери ĕçес килнĕ. Вăйсем чакнăçемĕн чакса пынă. Анчах та парăнма юрамастех. Курассисем малта-ха; и-и, миçе сехет, миçе кун ишмелле-ха тата?! Вăя сыхлас пулать, кĕрешес пулать.

Кăнтăрла сулăнсан уçă çил вĕрме пуçланă, кимме суллантарма тытăннă.

Юр: „Айтăр комбинезонсенчен парус тăватпăр",—тесе сĕннĕ.

Сенкер комбинезона хăпăл-хапăл çурнă та, кирлĕ пек майлаштарса çыхнă. Иккĕн киммĕн икĕ хĕрринчен тăнă, çав халь çеç туса хунă паруса карса тытнă. Кимĕ вара хăвăртрах кайма тытăннă.

Çапла майпа вĕсем темиçе сехет хушши ишнĕ. Хĕвел анаспа çил чарăннă—каллех алăпа ишме тивнĕ.

Иккĕмĕш çĕр çитнĕ. Виçĕ паттăр çаплах-ха хаяр тинĕс хумĕсемпе кĕрешнĕ. Аллисем, тă-

вар каснипе, вутпа пĕçертнĕ пек ыратса тăнă. Тӳсме çук хырăмĕсем выçнă, çăварĕсем типнĕ, çав тери шыв ĕçессисем килнĕ.

Виççĕмĕш кун ĕнтĕ кĕрешнĕ. Тинĕс çинче сивĕте пуçланă. Çил тата хытăрах вĕрме тапратнă. Кимме унталла-кунтала тыта-тыта ывăтнă, кимĕ ăшне шыв тулса ларнă. Шывне ăса-ăса тăкма пуçланă, анчах та усси питĕ сахал пулнă.

Шăп çав вăхăтра çыран курăнса каять. Геройсем савăнăçлăн кăшкăрса яраççĕ:

— Çыран! Тăван çĕршывăмăр çыранĕ!

Хăвăртрах ишме тăрăшаççĕ, анчах та çыран çаплах-ха çывăхармасть. Шыçса хăпарса кайнă аллăсем аран-аран çеç çĕкленеççĕ, лĕнчĕрех усăнаççĕ.

Виççĕмĕш кунĕ те ĕнтĕ иртет, çыран çаплахха инçетре, кăшт çеç курăнса тăрать.

Тата тепĕр çĕрне çĕрлеççĕ. Халĕ ĕнтĕ çыран хĕррине тухма пĕр 80—100 метр çеç юлать. Анчах та пирĕн летчиксен унта çитмелĕх те вăйĕ юлмасть. Темиçе сехет хушши кĕрмешеççĕ летчиксем, çавах çыран хĕррине тухаймаççĕ. Çитеççĕ çеç, çавăнтах хирĕçле хум кимме каялла ывăтса та ярать.

Тӳпере мотор кĕрлени илтĕнсе каять. Кăна пирĕн разведчик вĕçсе пырать иккен. Самолет çинчен кимме асăрхаççĕ, геройсене кураççĕ.

Самолет шыв çине анать, пĕччен кимĕ патне çывхарать.

Туссем пĕр-пĕрне палласа илеççĕ, алă параççĕ, ытакласçĕ.

Чаплӑ çӗнтерӳ тунӑятпала саламланисем. Тивӗçлӗ кану.

Халӗ ӗнтӗ геройсен виççӗшин те сывлӑхӗсем аван, виççӗш те тӑшман килсе тухсан, халь тесен халь ӑна хирӗç вӗçсе тухса, ун пуçне çапса аркатма хатӗр.

„Хӗрлӗ Флот".

## ХĂЮЛЛĂ РАЗВЕДЧИК БЕЛЯКОВ

Тупăсем кĕрлеççĕ, тăшман хаяррăн тапăнса килет. Пирĕн чаçсем фашистсене тăвăллă вутпа кĕтсе илчĕç. Темиçе сехет ĕнтĕ пырать çак вăйлă çапăçу, нимĕçсем вуншар хутчен атакăна кĕрсе пăхрĕç, анчах совет хĕçпăшалĕ сапакан тăхлан çăмăра тӳсеймесĕр кашнинчех каялла чакрĕç.

Акă ĕнтĕ вĕсен тапăнса килес чăрсăрлăхĕ хавшарĕ пулас. Тăшман вăрман хĕрринчи хӳтлĕхе йăпшăнса выртрĕ те сасартăках пеме чарăнчĕ. Шăп.

„Тĕлĕнмелле, — шухăшларĕ командир, — çав бандитсем темĕскер кĕтмен ирсĕрлĕх хатĕрлемеççĕ-ши?"

Командир хăй патне Беляков сержанта чĕнсе илчĕ.

— Сержант юлташ! Хăвăрпа пĕрле икĕ боеца илĕр те тăшманăн вут сапакан йăвисем ăçта вырнаçнине тупса палăртăр.

— Есть! Хушнă ĕçе тăвăпăр!..

Разведчиксем, хăйсем çине лаштра та симĕс çулçăллă йывăç тураттисем çакса, малалла шума пуçларĕç. Акă вĕсем пирĕн пехотăн малти линийĕнчен шуса иртсе кайрĕç. Умра — вăрман.

Унта—тăшман. Анчах хăш тĕле вырнаçнă-ши вăл?

Беляков хăйпе пĕрле шăвакан икĕ разведчика чарăнса пытанма хушрĕ, хăй çав вăхăтра вĕтĕ йывăç тĕмисемпе витĕннĕ пысăк мар сăртлăха шуса хăпарса, бинокль витĕр умри вырăна сăнама тытăнчĕ.

Таврара нимĕн те палăрмасть. Чĕмсĕр вăрман, пушă уйхир. Анчах авă, таçта сылтăмра, винтовкăран пенĕ вут ялтлатса илчĕ.

„Кунта!"—шухăшларĕ сержант.

Вăл хыçри разведчиксене сигнал пачĕ те, вĕсем каллех малалла шăва пуçларĕç. Вĕсем, симĕс çулçăпа витĕннĕскерсем, кашни йывăç тĕмипе, кашни тĕмескепе усă курса, шăваççĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсем тăшман йышăннă вырăн патне çывхарса пычĕç.

Çав вăхăтра пирĕн подразделени, тăшман тимлĕхне хăйолла разведчиксенчен аяккалла сирес тесе, противник çине вут тăкма тытăнчĕ.

Пĕр самантлăха фашистсем чĕнмерĕç, унтан хускалчĕç те хирĕç пеме пуçларĕç.

Разведчиксем хăвăртрах малалла шуса кайрĕç. Вĕсен куçне противникăн вут сапакан йăвисем уçăмлăнрах курăнма пуçларĕç. Анчах пурте мар. Таçтан, куçа курăнман пулемет кĕске черетсемпе вĕçĕмсĕр вут тăкать. Пулемет ăçта вырнаçнине палăртмаллах!

Сержант Беляков тăшман патне тата çывăхрах шуса пыма шут тытрĕ. Хуллен те асăрханса, кашни сас-чĕве тимлĕн итлесе шăвать

вăл. Сасартăк ун хăлхине çын сассисем илтĕнсе каяççĕ, сăмахĕсем ăнланмалла мар.

— Фашистсем! — татăклăн шухăшлать Беляков.

Чăн та, ун патĕнчен пĕр вунă метрта, тупă йĕтри алтса хăварнă лакăмра, тăшмансем лараççĕ. Беляков вĕсенчен кăшт аяккарах пăрăнса, çаплах малалла шăвать. Вăрман хĕрне çитсен чарăнать. Халь ĕнтĕ вăл тăшман вырнаçнă çĕртех.

Беляков, хăй шыранă вут йăви ăçта вырнаçнине паллă тăвать те, каялла чакма тытăнать.

Анчах Беляковпа унăн юлташĕсем çирĕм метр та каялла шăваймаççĕ, сасартăк пăшал сассисем илтĕнсе каяççĕ, Тăшман хăюллă разведчиксене асăрхаса илнĕ. Вĕсем çине пуля çăмăрĕ тăвăллăн сапăнма пуçлать. Разведчиксем хирĕç переççĕ. Нимĕçсем çывхараççĕ, разведчиксене çавăрса илме пуçлаççĕ, ункă сыпăнса, хĕсĕнсе пырать. Боецсенчен пĕри вилсе каять. Халĕ ĕнтĕ вĕсем иккĕнех юлаççĕ. Вĕсем тăшмансене хӳтлĕхрен тухаканне пĕрне перепере ӳкереççĕ.

Анчах разведчиксем иккĕн кăна, нимĕçсем — ик-виçĕ теçетке. Ункă хĕсĕнсе пырать. Тăшман пульли иккĕмĕш боеца çапса ӳкерет. Беляков тăр-пĕччен тăрса юлать.

— Суятăн, тытаймăр! — хаярланса пăшăлтатать сержант.

Вăл пысăк мар тĕмеске хӳтлĕхне вырнаçать те вĕçĕмрен вут тăкать. Фашистсем çывхараççĕ, вĕсем разведчика тыткăна илесшĕн пулас.

— Парăн!—кăшкăрчĕ такăшĕ нимĕçсенчен пĕри, кăнттамланса тухакан вырăс чĕлхипе.

— Ме, хып!—тавăрчĕ Беляков.

Аллине вăйлăн сулса ярса, вăл тăшмансем çине умлăн хыçлăн икĕ граната ывăтрĕ.

Хура юпасем пек тăпра вăркăнса çĕкленчĕ, кăшкăрнă, йынăшнă сасăсем илтĕнсе кайрĕç. Беляков, тепĕр граната ывăтрĕ те, сăртлăхран хыттăн палтăртатса анса, йывăç тĕмисен хӳттине пытанкаласа, кунталла чупма тытăнчĕ. Анчах тăшман ăна хыçранах хăвалать: вăл разведчика мĕнле те пулин тыткăнах илесшĕн.

Беляков пытанчĕ. Нимĕçсем ăна вăрман хĕрринче шыраççĕ. Унта та кунта пĕрерĕн-пĕрерĕн пăшал пенĕ сасăсем илтĕнеççĕ. Хăш чухне тăшмансем Беляков патĕнчен инçех те мар иртсе каяççĕ, анчах ăна асăрхаймаççĕ—вăл, ешĕл çулçăпа витĕннĕскер, пĕр хускалмасăр выртать.

Тавралăх ерипен лăпланать. Нимĕçсем разведчика тупассине шанми пулчĕç тейĕн. Тата кăштах выртсан, Беляков хускалать те, чарăна-чарăна, таврари сас-чĕвĕсене итле-итле, ерипен хамăрăннисем патнелле шума тытăнать. Пĕр чун та çук тейĕн. Шăп.

Анчах вăл вăрмантан тухма ĕлкĕрет кăна, çавăнтах ун çине виçĕ енчен виçĕ нимĕç ывтăнать.

Вĕсенчен пĕрине Беляков çавăнтах персе ӳкерет.

Тепри сержант çине хыçалтан ывтăнать, унăн

хулĕсенчен ярса тытса, ăна ÿпĕнтерме хăтланать. Фашиста çĕре сирсе пăрахса, Беляков ăна прикладпа çапса лапчăтать.

Виççĕмĕш нимĕçĕ, çакна курса, Белякова пăшалпа персе пăрахма тăрать. Сержант, кăшт пĕшкĕнсе, нимĕç çине ывтăнать, унтан тăшман аллинчи винтовкăна туртса илсе, тăшмана штыкпа чиксе пăрахать.

Пăшал сассине илтнĕ нимĕçсем çапăçу пынă çĕре васкаççĕ. Кунтан мĕнле те пулин хăвăртрах шăвăнмалла. Хырăмпа шуса, хушăран тăра-тăра чупса, чулсем хыçне те лапамсене пытанса, разведчик каялла, хамăрăннисем патне, васканă.

Унăн вăйĕ пĕтсе çитет, çак вăхăтра вăл:

— Стой! Кто идет?—тенĕ сасă илтет.

Кусем хамăрăннисем иккен.

Белякова боецсем çавăрса илеççĕ, çĕклеççĕ, алă çинче йăтса каяççĕ. Пĕр саманта вăл хускалмасăр выртать. Унтан тăшмансем вырнаçса тăракан вăрман еннелле çавăрнать те, кулкаласа:

— Ну, мĕнле? Туянтăр-и?—тет.

Беляков разведка результачĕсем çинчен командира хăвăрттăн та уçăмлăн каласа парать.

Командир хыттăн чăмăртать ун аллине.

— Тав тăватăп, сержант юлташ!

— Совет Союзне служит тăватăп!—тесе çивĕччĕн татса калать хăюллă разведчик.

Кĕçĕн политрук
Н. ЭПШТЕЙН.

(„Красная звезда").

## ТУПМАЛЛИ


Стр.

Паттăрлăхпа хăюллăх . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Сталинла соколсен паттăрлăхĕ . . . . . . . . . . . . . 9
Фашистсен подводнăй лодкисене путарни . . . . . . 13
Кавалеристсемпе пилотсем . . . . . . . . . . . . . . 17
Тăшман самолечĕсене персе антарни . . . . . . . . . 21
Хăюллă та, чăтăмлă та . . . . . . . . . . . . . . . 25
Хăюллă разведчик Беляков . . . . . . . . . . . . . . 31



...ВАШСКАЯ
...ЖНАЯ ПАЛАТА
...Чувашской АССР



Редактор перевода *Ф. Афанасьев.*

НТ 2747. Подписано к печати 7-VIII.41 г. Тираж 4000 экз. Зак. № 375.
Печатных л. 1,13. Уч. авт. л. 0,85

Отпечатано в тип. № 1 Упр. изд. и полиграфии при СНК ЧАССР,
гор. Чебоксары, Дом печати.

Цена 60 коп.

НА ФРОНТЕ

БОЕВЫЕ ЭПИЗОДЫ

На чувашском языке

ГОСИЗДАТ ЧАССР - 1941